Иванов К.В. Ватӑ вӑрман шухӑшӗ; Кӗркунне; Парӑс; Урапа : [сӑвӑсем] / К.В. Иванов // Хатĕр пул. – 1980. - № 5. – С. 12-13.

# Константин ИВАНОВ



## Ватӑ вӑрман шухӑшӗ

Асап килсен, хĕн килсен,
Шухӑшласа ларатӑп:
Çамрӑк вӑхӑт, ыр вӑхӑт,
Ӑçта эсĕ çухалтӑн!
Çамрӑк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

## Кӗркунне

Шӑнтать ĕнтĕ кунсерен,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
Вĕçен кайӑк сассинчен
Хуйхӑ кĕрет чĕрене.
Карти-карти кайӑксем
Вĕçет тинĕс леш енне.

Тӑхӑннӑ йывӑçсем
Пурте сарӑ тумтирне.
Хĕвел кулать сайрарах,
Шӑрши пĕтнĕ чечексен
Йĕрсе ярĕ ак часах
Кĕркунне те вӑрансан.





# Парăс

М. Лермонтовран.

Пĕччен парăс шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...
Мĕн инçе, ют çĕрте вăл шырать!
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче!

Чÿхенеççĕ хумсем, çил улать,
Шăтăр-шатăр юпа авăнать...
Анчах парăс телей шырамасть,
Телейрен те тарса вăл каймасть!

Сутă юхăм унăн айĕнче,
Çÿлтен ылтăн хĕвел çутатать
Канăççăр çил-тăвăл шавĕнче
Канлĕх пур пек, тăвăл вăл ыйтать

# Урапа

Юрă

— Шăлтăр шăлтăр урапа,
Ăçта кайрăн урапа!
— Кайрăм, кайрăм урапа
Утсем валли ут çулма.
— Шăлтăр-шăлтăр урапа,
Ăçта çултăн утăна!
— Çултăм, çултăм урапа
Парлак çинчи курăка
— Кампа çултăн, урапа!
Кампа çултан утăна!
— Çултăм, çултам урапа
Атте тарçи Елеçпе.
Атте тарçи Елеç пур,
Унăн çави вырăсла:
Пĕр çаварса кастарсан
Ик ытама кĕрес çук.

